Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
12
ЫТЛАРИКУН
203(6440) №.

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Нимĕçсен Витебск енчи оборонин пысăк тĕввине ЛИОЗНО хулине тытса илесшĕн çапăçнă чухне чапа тухнă БЕЗУГЛЫЙ генерал-майорăн 158-мĕш стрелковăй дивизине, КОВАЛЕВ полковникăн 28-мĕш Гвардейски танковăй бригадине, САВЛЕВИЧ полковникăн 4-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери бригадине, ГАБИДАШВИЛИ подполковникăн 427-мĕш гаубицăллă артиллери полкне тата МИРЗОЕВ майорăн 114-мĕш мото-инженернăй батальонне „ЛИОЗНЕНСКИ" тесе ят парас, вара малашне вĕсене çапла чĕнмелле тăвас:

158-мĕш Лиозненски стрелковăй дивизи,
28-мĕш Гвардейски Лиозненски танковăй бригада,
4-мĕш Лиозненски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади,
427-мĕш Лиозненски гаубицăллă артиллери полкĕ,
114-мĕш Лиозненски мото-инженернăй батальон.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ **И. СТАЛИН.**

1943 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне С. К. ТИМОШЕНКО юлташа 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăласси çинчен

Тамань çурутравне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене ăнăçуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи çарсен операцийĕсене ертсе пырас ĕçре пулăшнăшăн наградăлас:

1-мĕш степень Суворов орденĕне

Совет Союзĕн Маршалне Семен Константинович ТИМОШЕНКĂНА.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Çарăн генералĕсемпе офицерĕсене çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Аялта асăннă çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх йышăннă çар званийĕсене парас:

Арми генералĕн званине

Иван Ефимович **Петрова**

Генерал-полковник званине

Андрей Антонович **Гречкăна**
Константин Николаевич **Леселидзене**

Генерал-лейтенант званине

Алексей Александрович **Гречкина**
Иван Андреевич **Ласкина**

Генерал-майор званине

Вениамин Яковлевич **Горбачева**
Михаил Ильич **Колдубова**

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнарком Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар генералĕсене Суворов тата Кутузов орденĕсемпе наградăласси çинчен

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусен операцийĕсене ăста та хăюллă ертсе пынăшăн тата çав операцисенче тунă çитĕнӳсемшĕн çаксене наградăлас:

1-мĕш степень Суворов орденĕпе

Арми генералне Иван Ефимович **Петрова**

1-мĕш степень Кутузов орденĕпе

1. Интендант службин генерал-майорне Владимир Антонович **Баюкова**
2. Генерал-полковника Андрей Антонович **Гречкăна**
3. Генерал-лейтенанта Алексей Александрович **Гречкина**
4. Генерал-лейтенанта Иван Андреевич **Ласкина**
5. Генерал-полковника Константин Николаевич **Леселидзене**.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн чи аслă командăй составĕ валли çĕнĕ çар званийĕсем тăвасси çинчен

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи тата 1943 çулхи январĕн 16-мĕшĕнчи указĕсем çумне хушса Хĕрлĕ Çарăн чи аслă командăй составĕ валли çакăн пек çар званийĕсем тăвас:

1. Артиллерин Главнăй Маршалĕ
2. Авиацин Главнăй Маршалĕ
3. Бронетанковăй çарсен Главнăй Маршалĕ
4. Сыхăну çарĕсен Маршалĕ
5. Сыхăну çарĕсен Главнăй Маршалĕ
6. Инженернăй çарсен Маршалĕ
7. Инженернăй çарсен Главнăй Маршалĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕ.

Ирĕке кăларнă районсене пулăшаççĕ

Канаш районĕнчи чылай колхозсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене выльăхсем сутăн пама тытăнчĕç.

Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз 5 сысна, 5 сурăх, Анаткас Уçырмари «Комбайн» колхоз 10 пуç выльăх сутнă. Ку ĕç ытти колхозсене те тавăн пулса пырать.

И. МАКСИМОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ÇУРÇĔР-КАВКАЗ фронтĕнчи çарсем, çĕр çинчен пыра-пыра çапса тата тинĕс çинчен десант антарса, темиçе кун хушши вăйлă çапăçнă хыççăн тăшманăн Тамань çурутравĕнчи группировкине йăлтах аркатса тăкнă та октябрĕн 9-мĕшĕнче Тамань çурутравне нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитерĕç, çапла вара нимĕçсен Кубаньри плацдармне пĕтерсе лартрĕç.

Тамань çурутравне тăшмантан тасатнă чухне пирĕн çарсем, тулли мар даннăйсем тăрăх, çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксем—52, тупăсем—337, минометсем—229, йывăр миномет аппарачĕсем—540, паровозсем—83, вагонсем—2.073, тĕрлĕ складсем—184 тата ытти çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 20.000 ытла вилли юлнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çынна тыткăна илнĕ.

ДНЕПР шывĕн вăтам пайĕнче пирĕн çарсем юханшывăн сылтăм енчи плацдармĕсене аслăлатассишĕн малтанхи районсенче çапăçнă, хăшпĕр участоксенче хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем 4 километртан пуçласа 6 километр таран малалла кусна, халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнĕ, вĕл шутра Витебск облаçĕнчи район центрĕ пулса тăракан ЛИОЗНО хулине тата ЕМЕЛЬЯНОВО, ЗАЛЕСЬЕ, ПОРТАСОВА, ИВИШНЯ, БЛАШКИНО, ДРОЗДЫ, МИХЕЕВА, КОРОБКИ, ХОЛБНЯ ятлă пысăк ялсене тытса илнĕ.

НЕВЕЛЬ районĕнче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, 24 яла тытса илнĕ.

Октябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 70 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен тупăсем тăшманăн 47 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи çарсем, тăшманăн Тамань çурутравĕ çинчи группировкине пĕтерсе тăкса, паян Тамань çурутравне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса пĕтерчĕ. Пирĕн çарсем ирхине ирех нимĕç оборонин юлашки рубежне татса кĕнĕ. Совет танкĕсемпе пехоти Тамань çурутравĕн хĕвеланăç хĕрне тухнă та Ильич Кордонне тытса илнĕ. Тăшманăн аркатса тăкнă чăçĕсене тинĕс хĕррине хĕстерсе лартнă та пĕтерсе тăкнă. Тулли мар даннăйсем тăрăх, 20.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Чушка ятлă вырăнта тăшманăн темиçе пин вилли выртса юлнă. Гитлеровецсен пĕр пайне Керчь пролививе хăваласа кĕртсе шыва путарса вĕлерне. Çавăн пекех тата тăшман пехотине тиесе Тамань çурутравĕнчен Керчь çурутравĕ çине каçса кайма тăнă 8 баржăна шыва путарнă. 3.000 нимĕçе тыткăна илнĕ.

Пирĕн çарсем трофейсем нумай тытса илнĕ, халĕ вĕсене шута илеççĕ. Çурутравăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче темиçе çĕр тупă, миномет, йывăр миномет аппарачĕсем, автомашинăсемпе лавсем, питĕ нумай пулемет, винтовка, снаряд, патрон тата граната выртаççĕ. Пирĕн çарсем аллине тата запас хĕçпăшал, боеприпассем, апат-çимĕç, тумтирсем, инженерла пурлăх тата сыхăну хатĕрĕсем тултарнă 184 склад лекнĕ.

* * *

Днепр шывĕн сылтăм хĕрринче пирĕн çарсем плацдармсене аслăлатасшăн çаплах çапăçнă. Пĕр районра пĕр соединени чăçĕсене тăшманăн 2 полк пехоти тата 70 танкĕ атакăланă. Кун каçах хаяр çапăçу пынă. Пирĕн боецсем, тăшман контратакисене сире-сире ярса, нимĕçсен 28 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 4 тупăпине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă тата 1.000 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Каç пулса килнĕ тĕлелле совет чăçĕсем тăшмана флангран пырса çапнă та пĕреклетнĕ икĕ яла тытса илнĕ. Трофейсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче хăй тĕллĕн çӳрекен 3 тупă тата 11 хир тупăпи пур. Тепĕр районра пирĕн çарсем, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Кун каçиччинхи çапăçусенче нимĕçсен пĕр полка çити пехотине тата 11 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăпине пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиаци пĕр çĕре пухăнса тăнă нимĕç çарĕсене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем пăрахнипе пула тупăсемпе автомашинăсене нумай пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ тата гитлеровецсене икĕ батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 36 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Витебск енче пĕр соединени чăçĕсем, малалла куçса, Лиозно патне пырса тухнă. Нимĕçсем ку хулана питĕ вăйлă çирĕплетнĕ. Унта вĕсем темĕн чухлĕ траншейăсемпе окопсем, дотсемпе блиндажсем туса тултарнă. Пирĕн разведка тăвакан подразделенисем, тăшман вăйĕсене хăйсем çине туртса илме, хĕвелтухăç енчен атакăсем тунă. Çав вăхăтра ытти чăçсем Мошна шывĕ урлă каçнă та Лиозно хулине çурçĕртен тата хĕвеланăç енчен çавăрса илнĕ. Виçĕ енчен пырса çапса, пирĕн çарсем Лиозно хулине тытса илнĕ. Малалла наступлени туса пырса, пĕр соединени боецĕсем халăх пурăнакан чылай яла тытса илнĕ. Çав çапăçусенче 800 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 22 тупă, 46 автомашина, 6 трактор-тягач, боеприпассем тата çар пурлăхĕн 15 складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, 30 яла ытла тытса илнĕ. 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Трофейсем тытса илнĕ.

* * *

Невель районĕнче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр участокра тăшманăн пехотипе танкĕсем, пĕр вăхăтрах икĕ енчен пырса çапса, пирĕн малти отрядсене татса илме хăтланнă, анчах тăшман ĕçĕсем ăнăçман. Пирĕн гвардейски чăçсем тăшман контратакисене сире-сире ярса малалла куçнă та 24 яла ытла тытса илнĕ. Тăшмана пысăк сухатусем кӳнĕ. Пĕр участокра кăна нимĕç пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ шоссе çулĕ хĕрринче засада тунă. Ирхине ирех çав шоссепе 5 тонна турттакан 5 грузовик тата тăшман салтакĕсене лартнă çăмăл автомашина пынă. Нимĕçсем сывăхарса çитсен, партизансем вĕсене пулеметсемпе пеме пуçланă тата гранатăсем вăркăнтарма тытăннă. Çул çинче тăшманăн 40 вилли выртса юлнă, ыттисем тарса саланнă. Совет патриочĕсем трофейсем тытса илнĕ, автомашинисене çунтарса янă. Тепĕр кунне çав отрядри разведчик-партизансемех пысăк чугун çул станцине пырса кĕнĕ те нимĕçсен çавăнти мастерскойра халь тин юсаса пĕтернĕ йывăр танкне сирпĕнтерсе янă.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

СССР Совнаркомĕнче

Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн ют патшалăхсенчи дипломатиллĕ работникĕсене, ССР Союзĕн ют патшалăхсенчи Посольствисемпе Миссийĕсенче ĕçлекен дипломатиллĕ работниксене формăллă тумтир тăхăнтартмалла тăвасси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн ют патшалăхсенчи дипломатиллĕ работникĕсене, ССР Союзĕн ют патшалăхсенчи Посольствисемпе Миссийĕсенче ĕçлекен дипломатиллĕ работниксене формăллă тумтир тăхăнтартмалла тунă. Пĕр форми ялан (çулла е кĕлле) тăхăнса çӳремелли тумтир, тепĕр форми—уяв вăхăчĕсенче тăхăнмалли тумтир. Формăсен тĕслĕхĕсене тата çав тумтирсем епле пулмаллине Совнаркома Наркоминдел çырса панă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн ют патшалăхсенчи дипломатиллĕ работникĕсен, ССР Союзĕн ют патшалăхсенчи Посольствисемпе Миссийĕсенче ĕçлекен дипломатиллĕ работникĕсен уйрăмлăх паллисен тĕслĕхĕсене, çав паллăсем мĕнле пулмалли çинчен çырнине, яланхи тата уяв кунĕсенчи формăллă тумтире тăхăнса çӳремелли правилăсене çирĕплетнĕ.

Ĕçхалăх депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсен тăрăшнипе, уборка ĕçĕнче хăтĕнче тухса, лайăх ĕçленĕшĕн, государствăна тыр парса татнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансем республикăн Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

35. Октябрьски районĕнчи Горький ячĕллĕ колхоз (колхоз председателĕ Федоров юлташ). Çак колхоз 145 гектар тырра вăхăтра вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Çĕрулмине, пахча-çимĕçсене тата хăмлана пĕтĕмĕшпех пухса кĕртнĕ. Государствăна тыр парса татнă.

36. Чкаловски районĕнчи «Кзыл-Тан» колхоз (колхоз председателĕ Фейзулин юлташ). Ку колхоз тĕштырăсене районра чи малтан вырса пĕтернĕ, вĕсене вăл лайăх ĕçлесе, 15 ĕç кунĕнче вырса пĕтернĕ. Августăн 12-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Тĕштырăсем гектартан 16 центнер тухнă. Çĕрулмине, пахча-çимĕçсене пухса кĕртнĕ. Государствăна тыр парса татнă. Вăрлăх фончĕпе страховой фонда тыр хывса çитернĕ. Кĕрхи çĕртме тумалли плана 90 процент пурнăçланă.

37. Чкаловски районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз (колхоз председателĕ Булатов юлташ). Колхоз 149 гектар тырра 13 ĕç кунĕнче вырса пĕтернĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Çĕрулмине пахча-çимĕçсене пĕтĕмĕшпех пухса кĕртнĕ. Кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. Государствăна тыр парса татнă. Августăн 15-мĕшĕнче, районра колхозсенчен чи малтан, вăрлăх фончĕпе страховой фонда тыр хывса çитернĕ.

38. Чкаловски районĕнчи «Авангард» колхоз (колхоз председателĕ Козлов юлташ). Колхоз 411 гектар тĕштырра лайăх тата вăхăтра вырса пĕтернĕ. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тыр парса татнă. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕрулмине пахча-çимĕçсене пухса кĕртнĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Республикăри финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи виççĕмĕш кварталти итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи виççĕмĕш кварталти итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Ишлей районĕнчи финанс отделĕ (заведующийĕ Абрамов, райсовет исполкомĕн председателĕ Херсонов) мала тухнине палăртса, ăна Совнаркомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш преми—7000 тенкĕ укçа пама йышăннă. Улатăр хулинчи финанс отделĕ (заведующийĕ Носков, горсовет исполкомĕн председателĕ Вельчинский) иккĕмĕш вырăна тухнă, ăна иккĕмĕш преми—5000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Виççĕмĕш вырăна Шупашкар районĕнчи финанс отделĕ (заведующийĕ Алексеев, райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов) йышăннă, ăна виççĕмĕш преми—3000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ 1943 çулхи виççĕмĕш кварталта доходсен планне тултарас тĕлĕшпе Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи тата Шупашкар хулинчи финанс отделĕсем лайăх ĕçлениине палăртнă.

Промысла коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи сентябрь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ промысла коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Чăвашпромсоюз системине кĕрекен Канашри „Авангард" артель, Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрекен Октябрьски районри Караньялĕнчи „Труд" артель, Чăвашпромсоюз системине кĕрекен Шупашкарти „Кожупряжь", древпромсоюз системине кĕрекен Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Новинскри „Кооператор" артельсем мала тухнă тесе йышăннă.

Канашри „Авангард" артель (председателĕ Васильев) сентябрьти плана пĕтĕм продукци енĕпе 109,9 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 108,3 процент тултарнă. Çапла продукци кăларассине августрипе танлаштарсан 32.000 тенкĕлĕх ӳстернĕ. Çакна шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Канашри „Авангард" артелĕнчех хăварма тата ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа пама йышăнна.

Караньялĕнчи „Труд" артеле (председателĕ Мокеев, Октябрьски райсовет исполкомĕн председателĕ Петров) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Шупашкарти „Кожупряжь" артеле (председателĕ Плетнева, хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин) ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Новинскри „Кооператор" артеле (председателĕ Ермаков, Сĕнтĕрвăрри райсовет исполком председателĕ Маклашкин) ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ сентябрь уйăхĕнче Улатăрти: „Красная звезда", „8-ое марта" тата „Красный восход", Сĕнтĕрвăрри районĕнчи: „Портной", „Парижская Коммуна"; Шупашкар районĕнчи „Правда", Етĕрне районĕнчи Сталин ячĕпе хисепленекен артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Чугун çулсене хĕле хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе ирттерекен вунăкунлăх

Ĕçе тытăнма вăхăт ĕнтĕ

ВКП(б) Обкомĕ чугун çулсене хĕле хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе вунăкунлăх ирттересси çинчен йышăннă решенире чугун çул сывăхĕнчи горкомсемпе райкомсен секретарĕсене татăклă кăтартусем пачĕ. Вĕсен вунăкунлăха ертсе пымалла, служащисемпе колхозниксене чугун çул çинче ĕçлеме организацилемелле.

Çак кăтартусене чылай районсенче паян кунччченех тивĕçлипе пурнăçа кĕртмеççĕ. ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ Митьков юлташ вунăкунлăх пуçламĕшĕнче: эпир ун çинчен ялсоветсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕнче сӳтсе яврăмăр, ырантан пуçласа колхозниксем чугун çул çинче ĕçлеме тухаççĕ, тесе пĕлтернĕччĕ. Анчах чугун çул çинче ĕçлекенсен йышĕ халĕ те питĕ сахал-ха.

Красноармейски районра та çаксаççĕ. Партипе совет организацисен руководителĕсем чугун çул работникĕсене куллен пулăшас вырăнне, пирĕн пысăкрах ĕçсем пур, тесе лараççĕ. Ишлей районĕнчен чугун çул çинче октябрĕн 8-мĕшĕнче 8 çын, 9-мĕшĕнче 3 çын, 10-мĕшĕнче 2 çын çеç ĕçленĕ. Çавăн пекех вунăкунлăх пуçланнăранпа Шупашкар районĕнчен мĕнпурĕ 15 çын, Шăхасан районĕнчен 22 çын çеç ĕçленĕ.

Чугун çул работникĕсен çемьисене ĕçлеме организацилесси те питĕ япăх пулса пырать. Шупашкар станцинчи работникĕсен çемьисем пачах ĕçе тухман. Станцăри партипе профсоюз организацийĕсем: пирĕн работниксен çемьисем çĕрулми кăларнă çĕрте ĕçлеççĕ, тесе лăпланса лараççĕ. Канаш станцинче те работниксен çемьисене ĕçе йышлă явăçтарман.

Вунăкунлăх иртсе пырать. Анчах вунăкунлăхра тумалли ĕçсене çуррине те пурнăça кĕртмен-ха. Партипе совет организацисен, чугун çул работникĕсен ĕçре татăклă улшăну тумалла хăвăрт мерăсем йышăнмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔҪĔ

* * *

Аяларах нимĕҫсен 596-мĕш полкĕнчи 7-мĕш ротăри ефрейторăн Антон Шецкон дневникĕнчен ҫырса илнĕ татăксене пичетлетпĕр:

Сентябрĕн 6-мĕшĕ. Ирхине 7 сехетре вырăссем пирĕн участокра наступлени пуҫласа ячĕҫ. Вĕсем пĕр сехет хушшинчех пирĕн оборонăна татса кĕчĕҫ. Вара кунĕпех йывăр ҫапăҫусем пычĕҫ. Пире питĕ пысăк ҫухатусем тӳстерчĕҫ. Эпĕ питĕ телейлĕ пултăм: пĕтĕм взводран пĕр эпĕ кăна тарса хăтăлма пултартăм. Взводри ытти салтаксене е вĕлерчĕҫ, е вĕсем тыткăна лекрĕҫ.

Сентябрĕн 9-мĕшĕ. Ҫаплах каялла чакатпăр. Пĕр ҫӳллĕ вырăнта хамăрăн мĕн чухлĕ вăй тăрса юлнине шутлама чарăнса тăтăмăр. Эпĕ хамăн куҫпа курнине аран-аран ĕненетĕм: икĕ кун хушши вăйлă ҫапăҫнă хыҫҫăн полк пĕтсех ларнă. Унта ҫын ахаль чухнехи ротăран та сахалтарах тăрса юлнă.

Сентябрĕн 11-мĕшĕ. Ирхине ирех пире йĕри-тавра ҫавăрса илни паллă пулчĕ. Пире машинăсем ҫине лартрĕҫ те илсе кайрĕҫ. Кунĕпех ҫӳрерĕмĕр, анчах та нĕҫта та тухса тарма пĕр шăтăк та тупаймарăмăр. Вара эпир шоссе ҫулĕ ҫине тухрăмăр. Кунта чи хăрушă ĕҫ пуҫланса кайрĕ: вырăс танкĕсем таҫтан сиксе тухрĕҫ те пире аркатма пуҫларĕҫ. Пурте тарса пĕтрĕҫ, тăрса юлнисем тыткăна парăнчĕҫ».

ОКТЯБРĔН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ДНЕПР шывĕн вăтам тăрăхĕнче пирĕн ҫарсем тăшман контратакисене сире-сире янă. Днепрăн сылтăм енчи плацдармсене аслăлатасшăн малтанхи районсенчех ҫапăҫнă.

ГОМЕЛЬ енче пирĕн ҫарсем, тăшман хирĕҫ тăнине ҫĕмĕрсе тăкса, ДОБРУЖ хулине тытса илнĕ. Ҫавăн пекех тата РУДНЯ, МАРЬИНО, ЧИСТАЯ ЛУЖА, ГОЛОВИНЦЫ, ЛАРИЩЕВО, КЛИМОВКА ятлă ялсене тата ЛАРИЩЕВО, КОРИНЕВКА ятлă чугун ҫул станцийĕсене илнĕ.

ВИТЕБСК енче пирĕн ҫарсем 6 километртан пуҫласа 12 километр таран малалла куҫнă, халăх пурăнакан 140 яла ытла тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче ЯНОВИЧИ, ЗАГОРОДНО, ШЕРКИНО, УНА, ЯНКОВЦЫ, БОЛЬШАЯ БЕРЕЗИНА, МАЛАЯ БЕРЕЗИНА, ГОРБОВО, КРАСНОЕ ГОРОШКОВО, СНИГИРИ ятлă пысăк ялсене тата КРАСНОЕ ятлă чугун ҫул станцине тытса илнĕ.

НЕВЕЛЬ районĕнче пирĕн ҫарсем, тăшман хирĕҫ тăнине сире-сире ярса, ҫаплах малалла тапăнса пынă, 40 яла ытла тытса илнĕ.

Октябрĕн 9-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 64 танкне персе ҫĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери тăшманăн 58 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Днепр шывĕн сылтăм енче пирĕн ҫарсем хăйсен плацдармĕсене аслăлатасшăн ҫапăҫнă. Пĕр районра пĕр соединени боецĕсем, тăшманăн пысăк вăйĕсен контратакисене сире-сире ярса, нимĕҫсен 27 танкне пĕтерсе тăкнă, 1200 нимĕҫ салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр районра пирĕн чаҫсем тăшман хирĕҫ тăнине ҫĕмĕрсе тăкнă та питĕ кирлĕ ҫӳллĕ вырăна тытса илнĕ. Ҫав вырăншăн ҫапăҫнă чухне тăшман пехотине пĕр батальона ҫити вĕлерсе пĕтернĕ тата 9 танк пĕтерсе тăкнă.

Пĕр соединени танкисчĕсен ушкăнĕ нимĕҫсене пĕр ялтан хăваласа кăларнă. Ҫав яла каялла туртса илесшĕн хăтланса, нимĕҫсем умлăн-хыҫлăн 8 хутчен контратака тунă. Пирĕн танкистсем пур контратакăсене те сирсе янă, темиҫе ҫĕр гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

Пирĕн летчиксем кун каҫиччен сывлăшри ҫапăҫусенче нимĕҫсен 19 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Гомель енче пирĕн ҫарсем, малалла куҫса, Добруж хулине тата темиҫе яла тытса илнĕ. Тăшман вăйлăн хирĕҫ тăнă, анчах та совет ҫарĕсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакнă. Пĕр участокра кăна нимĕҫсен салтакĕсемпе офицерĕсен 600 виллли ытла выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче 14 тупă пур. Тепĕр участокра пирĕн чаҫсем боеприпассен тата ҫар пурлăхĕн склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Витебск енче пирĕн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 140 яла ытла туртса илнĕ. Тăшман, артиллерипе миномётсенчен вăйлăн персе тата контратакăсем туса, пирĕн ҫарсене наступлени тума чарасшăн пулнă. Пĕр чаҫри боецсем, гитлеровецсен контратакисене сире-сире ярса, 12 километр малалла куҫнă. Тепĕр участокра пĕр соединени чаҫĕсем, тăшман хирĕҫ тăнине ҫĕмĕрсе тăкса, чылай ялсене тытса илнĕ. Ҫав ҫапăҫусенче 400 нимĕҫ салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 4 танк, 11 тупă тата 60 пулемет ытла пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн штурмлакан авиаци тăшман ҫарĕсене пыра-пыра ҫапнă, 70 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă. Боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, 11 миномет тата артиллери батарейисене персе ҫĕмĕрнĕ. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери нимĕҫсен 33 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Невель районĕнче пирĕн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынă. Нимĕҫсем хăйсен резервĕсене илсе пырса, пехотăн пысăк вăйĕсене ҫапăҫăва кĕртсе яраҫҫĕ. Вĕсене танксемпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен артиллери пулăшса пырать. Пĕр соединени чаҫĕсем, ҫапăҫса малалла куҫса, 40 яла ытла тытса илнĕ. Ҫав ҫапăҫусенче 1.000 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ҫити пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Пĕр чугун ҫул станцийĕ тата унпа кӳршĕллĕ ял районĕнче тăшманăн пысăк склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Украинăра кĕрешекен партизансен темиҫе отрячĕ, Киев облаҫĕн Днепр шывĕ ҫумĕнчи районĕсенче ҫапăҫаканскерсем, темиҫе яла тытса илнĕ. Хăйсене йĕри-тавра хӳтĕлесе, совет патриочĕсем тăшманăн нумай йышлăрах вăйĕсен хаяр атакисене сирсе янă. 400 гитлеровеца ҫити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕҫсен 50-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 123-мĕш пехотнăй полкăн штабра ĕҫлекен офицерĕ Гюнтер Кольман, Тамань ҫурутравĕ ҫинче тыткăна лекнĕскер, ҫапла каласа панă: «Нимĕҫ командованийĕ кăларакан пур приказсенче те, июльпе август уйăхĕсенче чаҫсене парса тăнăскерсенче, Кубаньри кĕперсем умĕнчи укрепленисем вăрҫă тĕлĕшпе тата политика енчен нимĕҫ ҫарĕшĕн питĕ кирлĕ укрепленисем пулса тăнине палăртса ҫырнăччĕ. Салтаксем кăна мар, офицерсем те нумайĕшĕ Тамань ҫурутравĕ ҫинчи нимĕҫ ҫарĕсен лару-тăрăвне шанчăксăр тесе шутласа тăнă, ĕҫ вĕҫленессе кăна кĕтсе тăнă. Анчах командовани урăхла шухăшланă. Вăл август уйăхĕнче тата сентябрьте те Тамань ҫурутравĕ ҫине хĕҫпăшал, боеприпассем тата апат-ҫимĕҫсем ярса тăчĕ. Складсем вăйлăн тулса пычĕҫ, кĕркуннехи шыв-шур вăхăчĕшĕн кăна мар, хĕлле валли те запассем турĕҫ. Анчах та вырăссем нимĕҫ командованин пĕтĕм шухăшĕсемпе планĕсене пăрахăҫа кăларчĕҫ».

* * *

Гомель облаҫĕнчи Носовичи ялĕнче, нимĕҫсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнăскерте, пурăнакан ҫынсем гитлерла ирсĕрсен усал ĕҫĕсем ҫинчен акт ҫырнă, унта ҫапла каланă: «Хĕрлĕ Ҫар пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан нимĕҫсем пирĕн мĕнпур пурлăха, нумай ҫулсем хушши тăрăшса ĕҫлесе тунăскере, ҫаратса илсе кайрĕҫ е пĕтерсе тăкрĕҫ. Хăйсемпе пĕрле илсе кайма пултарайманнине ҫунтарса ячĕҫ. Сентябрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле нимĕҫсен ятарласа тунă «факельщик» командисем, ял тăрăх ҫӳресе, пĕр ҫурт хыҫҫăн тепĕр ҫурта вут тивертсе тухрĕҫ. Пушарта темиҫе ҫĕр ҫурт, ялти шкулсем, аптека, больница, почта тата колхозсемпе совхозăн мĕнпур хуҫалăх ҫурчĕсем ҫунса пĕтрĕҫ. Фашистла ҫынҫиенсем ялти халăха пĕр пысăк ушкăн пухса сарая хăваласа кĕртрĕҫ те чĕрĕнех ҫунтарса ячĕҫ. Кăмăкпа кĕл ăшĕнче 65 ҫулхи Филимон Сишаненко, 50 ҫулхи Георгий Шеотопалов, 35 ҫулхи Василий Ступаков, 58 ҫулхи Тихон Сычев, 13 ҫулхи Павел Чуясов тата ыттисен ӳчĕсене те тупса палланă. Гитлеровецсем нимĕҫсемпе пĕрле Хĕвеланăҫнелле чакма килĕшмен граждансене нумайĕшне персе пăрахрĕҫ».

Колхоз тыррине вăрланăшăн ответ тыттараҫҫĕ

ТАВАЙ. Киччĕ ялĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхозра Н. Долгова, О. Карлова, Константинова колхозницăсем итем ҫинчен тырă туртнă чухне 5 центнер тырă вăрлама хăтланнă. Вĕсене ҫак киревсĕр ĕҫе тунă вăхăтрах тытнă.

Халĕ кашнине судпа айăплаҫҫĕ.

ЯЛХУҪАЛĂХ ĔҪĔСЕНЕ ВĔҪЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

Трактористсем фронтовой уйăхлăхра

Чкаловски облаҫри комбайнерсемпе трактористсем чĕнсе каланине сӳтсе-явса, пирĕн МТС коллективĕ конкретнăй обязательствăсем илчĕ. Ҫав обязательствăсене пурнăҫа кĕртсе, пирĕн трактористсемпе комбайнерсем начар мар ĕҫлерĕҫ. МТС кăҫал ҫултилăкри ĕҫ планне срокчен пурнăҫларĕ, халĕ авăн ҫапмалли плана ирттерсе пурнăҫлассишĕн кĕрешет, фронтовой уйăхлăха активлăн хутшăнчĕ. Фронтовой уйăхлăхăн малтанхи эрнинче уйрăм бригадăсем пысăк ҫитĕнӳ турĕҫ. Вĕсем кĕрхи ҫĕртме тăваҫҫĕ, молотилкăсемпе ĕҫлеҫҫĕ, ĕҫ кунĕн кашни сехетне туллин усă курма тăрăшаҫҫĕ. Стружков юлташăн трактор бригади кĕрхи ҫĕртме тумалли плана ирттерсе тултарчĕ. План тăрăх 320 гектар сухаламалла пулсан, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне бригада 346 гектар сухаларĕ.

Авăн ҫапакан бригадăсем те начар мар ĕҫлеҫҫĕ. Каргин юлташ ертсе пыракан бригада авăн ҫапмалли плана ирттерсе тултарчĕ. План тăрăх бригадăн кăҫал 400 тонна тырă ҫапса памалла, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вăл 600 тонна ытла ҫапнă. Ҫавăн пекех Васильев, Мясников, Долгов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем те авăн ҫапмалли плана чылай ирттерсе тултарнă. Трактористсем районри пур колхозсенче те октябрĕн 20-мĕшĕччен авăн ҫапса пĕтерессишĕн тăрăшаҫҫĕ.

МТС районри 53 колхозра ĕҫлет. Вĕсенчен 15-шĕнче халь авăн ҫапса пĕтернĕ. Ытти пур колхозсенче те ҫитес сывăх кунсенчех авăн ҫапса пĕтеретпĕр.

П. ЯШИН,
Елчĕк МТС-ĕн директорĕ.

Кĕрхи ҫĕртме тумалли плана ирттерсе тултарнă

СЕНТЕР. Кăпаҫри «КИМ» колхоза фронтран аманса таврăннă Н. Скворцов юлташ ертсе пырать.

— Фронтра тăшмана хирĕҫ хĕҫпăшалпа ҫапăҫма халĕ юрăхсăр эпĕ. Ялхуҫалăх ĕҫĕсене лайăх туса пынипе, государствăна тырă тата ытти ҫимĕҫсене те ытлăн-ҫитлĕн парса тăнипе ҫапатпăр халĕ тăшмана. Кунта та фронт,— тет Скворцов юлташ.

Кăпаҫри «КИМ» колхоз вăрнарсем чĕнĕвĕ ҫине тимлĕ ĕҫпе ответлерĕ. Фронтовой уйăхлăх пуҫланнă хыҫҫăн колхозниксем тата хĕрӳллĕнрех те тимлĕнрех ĕҫлеме пуҫларĕҫ. Колхоз сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне ялхуҫалăхĕнчи пур ĕҫсене те туса пĕтерчĕ. Авăн ҫапса пĕтернĕ, государство умĕнчи пур парăмсене те колхоз тата колхозниксем йăлтах парса татрĕҫ. Кĕрхи ҫĕртмене пысăк пахалăхпа турĕҫ. План тăрăх 120 гектар сухаламалла пулсан, 135 гектар сухаласа хăварчĕҫ. Техникăллă культурăсене те пухса кĕртрĕҫ. Кантăра шыва хутса кăларнă, вăрлăхлăх клевера шĕкĕлчесе хунă.

Халĕ «КИМ» колхоз государствăна 1944 ҫулшăн авансла тырă, ҫĕрулми, пахча-ҫимĕҫ парать.

А. СОЛОВЬЕВ.

Хĕрлĕ Ҫара вăйлăнрах пулăшас туйăмпа

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ паттăр Хĕрлĕ Ҫара тав туса панă приказсене колхозниксем хаваслăн кĕтсе илеҫҫĕ. Вĕсем Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата тĕнчери лару-тăрăва кулленех пĕлсе тăрасшăн ҫунаҫҫĕ.

Ҫак хаяр ҫапăҫусем пынă вăхăтра кашни колхозник пуҫĕнче пĕр шухăш: фронта пулăшасси.

— Эпир те ҫак чаплă ҫĕнтерӳсене туптатпăр. Тылра ырми-канми ĕҫлетпĕр, Хĕрлĕ Ҫара ҫителĕклĕ таран тырпул, аш-какай, пахча-ҫимĕҫсем парса тăратпăр. Ҫав ҫимĕҫсем фронта боеприпассем пекех кирлĕ,—теҫҫĕ Доронин ячĕпе хисепленекен колхоз членĕсем.

Вĕсем пĕтĕм ĕҫе вăрҫă интересĕсемшĕн туса пыраҫҫĕ. Колхоз, государствăна кăҫалхи ҫулшăн тырă, пахча-ҫимĕҫ, ҫĕрулми, аш-какай, сĕт-ҫу, ҫăмарта парса татса, 1944 ҫулхи обязательствăсем шучĕпе аванс пама тытăннă. Колхоз председателĕ коммунист И. Кузьмин колхоза пĕлсе ертсе пынине пула тата колхозри ытти коммунистсем те производствăна активлăн хутшăннине пула, колхоз кĕрхи ҫĕртме туса, ҫĕрулми кăларса пĕтернĕ. Ҫак кунсенчех авăн ҫапса пĕтереҫҫĕ.

Вăй-хала шеллемесĕр, кунне-ҫĕрне пĕлмесĕр ĕҫлекен колхозниксем кунта вуншарăн шутланаҫҫĕ. Кăҫал 9 уйăх хушшинче Ф. Игнатьева, М. Демьянова, Н. Сергеев, М. Захаров, М. Елизарова тата ытти колхозниксем те 250—300-шер ĕҫкунĕ турĕҫ.

Парторганизаци хăйĕн ретне кулленех, колхозри стахановецсенчен ӳстерсе пырать. Кăҫал 6 ҫынна ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Вĕсен шутĕнче колхозри чи паллă стахановец-тимĕрҫĕ тата машиновед Д. Михайлов, 1-мĕш бригадăн бригадирĕ И. Кондратьев, Н. Краснов, Игнатьева, Яковлев юлташсем пур. Вĕсем пурте колхоз ĕҫĕнче активлăн ĕҫлеҫҫĕ.

Колхозра коммунистсен йышĕ ӳссе пынипе пĕрлех ĕҫ дисциплини те ҫирĕпленсех пырать. Коммунистсем массăллă ăнлантару ĕҫе йĕркеллĕ туса пыраҫҫĕ. Халĕ вĕсем тимлесех «Совет Союзĕн отечественнăй аслă вăрҫи ҫинчен» Сталин юлташ ҫырнă кĕнекене вĕренеҫҫĕ. Кружока ялти актива анлăн явăҫтарнă. Сталин юлташăн кĕнекине вĕренни коммунистсене ĕҫре пулăшать. Коммунистсем ҫулпуҫăн чаплă сăмахĕсене колхозниксем патне ҫитереҫҫĕ. Ҫакă вăл колхозниксене ĕҫре хавхалантарса пырать.

Агитаторсем уборка вăхăтĕнче кăна колхозниксене 319 хутчен хаҫатсем вуласа панă, 34 хутчен докладсемпе калаҫусем ирттернĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Коммунистсен районри пухăвĕ

СЕНТЕР, октябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунта ĕнер районри коммунистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура райком секретарĕ Я. Петров юлташ ялхуҫалăх ĕҫĕсене вĕҫлемелли фронтовой уйăхлăх мĕнле пыни ҫинчен доклад туса пачĕ.

Фронтовой уйăхлăха хутшăннăранпа чылай колхозсем авăн ҫапас, государствăна тырă парас тата кĕрхи ҫĕртме тăвас ĕҫсене хăвăртлатрĕҫ. Паянхи кун тĕлне район 18.977 гектар тыррине ҫапса кĕртрĕ, государствăна тырă памалли плана 83 процент ытларах пурнăҫларĕ, кĕрхи ҫĕртме тумалли плана 41 процент тултарчĕ. Районри 37 колхоз авăн ҫапса пĕтернĕ, 48 колхоз государство умĕнчи мĕнпур парăмсене татнă. Чылай колхозсем выльăх-чĕрлĕхе хĕл каҫарма тĕплĕн хатĕрленсе ҫитнĕ.

Докладчик ҫакăнпа пĕрлех юлса пыракан колхозсем ҫинчен, ĕҫ ҫине сиелтен пăхакан руководительсем ҫинчен чарăнса тăчĕ. Урпаш ялсоветĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозра авăн ҫапас, государствăна тырă парас, кĕрхи ҫĕртме тăвас ĕҫсем питех те юлса пыраҫҫĕ. Колхоз председателĕ коммунистка Кузьмина ĕҫ ҫине сиелтен пăхать. Комбайнпа ҫапнă 150 пăт тырă чылай вăхăт хушши итем ҫинче выртрĕ, халĕ ĕнтĕ вăл пĕтĕмĕшпех ҫĕрсе кайнă. Кунта обществăллă пурлăха сыхлас ĕҫе тивĕҫлипе туса пымаҫҫĕ. Итем ҫинче хурал ҫук.

Вăрманкассинчи «Крестьянская газета» колхозри коммунистсем те тăккаланчăкпа ҫителĕксĕр кĕрешеҫҫĕ. Каганович ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕҫленĕ М. Кабуркин ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ «1943 ҫулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуҫалăх продукчĕсене хатĕрлесси ҫинчен» йышăннă постановленине ҫирĕппĕн пурнăҫа кĕртсе пыман. Вăл государствăна тырă пама тытăначченех ҫĕнĕ тырра колхозниксене аванс шучĕпе пама тытăннă. Ҫавăнпа государствăна тырă парас ĕҫе вăраха тăсса пынă.

Прение 16 ҫын тухса калаҫрĕҫ. «Пучах» колхоз председателĕ, коммунист Тямин хăйĕн колхозĕнчи ҫитĕнӳсем ҫинчен каласа пачĕ, ĕҫ опычĕпе паллаштарчĕ. Тухса калакансенчен чылайĕшĕ авăн ҫапас, государствăна тырă парас тата кĕрхи ҫĕртме тăвас ĕҫсене каяя хăварса пыракан колхозсен руководителĕсене, ҫавăн пекех хатĕрлев наркомачĕн районри уполномоченнăйĕн аппарачĕ сӳрĕк ĕҫленине хытă критиклерĕҫ.

Пуху асăннă ҫитменлĕхсене ҫине тăрса пĕтерме, фронтовой уйăхлăха ăнăҫлăн вĕҫлессишĕн мĕнпур вăя хурса кĕрешме чĕнчĕ. Пуху участникĕсем ВКП(б) Обкомĕн XVI-мĕш пленумĕн решенийĕсене тата Мускав облаҫĕнчи Коломна районĕнчи колхозниксем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту пуҫарма чĕнсе каланине тĕпе хурса ĕҫлеме пулчĕҫ.

Т. ИВАНОВ,
М. КАРПОВ.

Дональд М. Нэльсон господин Мускава килни

Октябрĕн 9-мĕшĕнче Мускава Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен вăрҫă хатĕрĕсем тăвас ĕҫсен Управленийĕн председателĕ Дональд М. Нэльсон господин килнĕ.

Мускава ҫитиччен Дональд М. Нэльсон господин ҫул май Сталинграда кĕрсе тухнă. Унта вăл нимĕҫ оккупанчĕсем хулана тунă сиенсене, ҫавăн пекех тата хулапа заводсене юсас ĕҫсем мĕнле пынине курса ҫӳренĕ.

Мускаври аэродромра Дональд М. Нэльсон господина Тулти суту-илӳ Халăх Комиссарĕн заместителĕ генерал-майор И. Ф. Семичастнов юлташ, ССР Союзĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи правительственнăй закупочнăй комиссин председателĕ генерал-майор А. И. Беляев юлташ, Наркомвнешторгăн суту-илӳ договорĕсен отделĕн начальник заместителĕ М. И. Сладковский юлташ, Наркомвнешторгăн суту-илӳ договорĕсен отделĕн Америка секторĕн начальникĕ П. С. Алексеев юлташ, ҫавăн пекех тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи ĕҫĕсен поверенăйĕ М. Гамильтон господин тата Америка посольствин членĕсем хирĕҫ тухса кĕтсе илнĕ. (ТАСС).

Ют ҫĕршывсенче

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ БРЕМЕНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пĕлтерет: октябрĕн 8-мĕшĕнче Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Бременри авиаци завочĕсене, порт сооруженийĕсене тата суднăсем тăвакан верфьсене тапăннă, ҫавăн пекех тата Фегезакри (Германия) подводнăй лодкăсем тăракан базăна тапăннă. Тăшман Америка самолечĕсене питĕ вăйлăн хирĕҫ тăнă. Америка самолечĕсем тăшманăн 142 истребительне персе ӳкернĕ. Америкăн 33 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ИТАЛИЕ ҪАРАТАҪҪĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пĕлтерет: Италири оккупациллĕ ҫарсен командованийĕ Германи салтакĕсемпе офицерĕсене Италире ҫаратса пухнă пурлăха Германие ярас тĕлĕшпе ҫăмăллăхсем панă. Ҫурҫĕр Италире гитлерла салтаксем уйрăм ҫынсен ҫурчĕсене кĕре-кĕре каяҫҫĕ те мĕн илес тенĕ ҫавна илсе тухаҫҫĕ.

«Ньюс кроникл» хаҫат ҫапла пĕлтерет: союзниксен войскисем Термоли хулинче Германи ҫарĕн инженерла чаҫĕсене панă приказа тупнă. Ҫав приказра ҫапла каланă: Германи ҫарĕсем каялла чакнă чухне ҫав инженерла чаҫсен ытларах ишĕлтерсе хăвармалла, тенĕ.

Америкăри хаҫатсем пĕлтернĕ тăрăх, Ҫурҫĕр Италире Итали халăхĕ нимĕҫсене хирĕҫ тăрасси вăйланса пырать. Нумай итальянецсем оккупантсемпе алла хĕҫпăшал тытсах кĕрешеҫҫĕ. Вĕсем пĕчĕк ушкăнсене уйăрăлса кĕрешеҫҫĕ; ялсенче нимĕҫ патрулĕсене тапăнаҫҫĕ, Германин апат-ҫимĕҫ склачĕсене аркатаҫҫĕ.

ГЕРМАНИРЕ ВИҪĔ «АПАТ-ҪИМĔҪ КОМИССАРНЕ» ВĔЛЕРНĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Афтонтиднинген» хаҫат ҫапла пĕлтерет: Бернра илнĕ хыпарсем тăрăх, ҫак кунсенче Эрфурт тата Веймар районĕсене (Германия) пĕтĕмпех ҫаврăнса илнĕ. Вĕсене гитлеровецсен виҫĕ «апат-ҫимĕҫ комиссарне» вĕлернĕ пирки ҫавăрса илнĕ. Ҫав комиссарсем вĕсем, ялтан яла ҫӳресе, выльăх-чĕрлĕхсене, сĕте, ҫăмартасене тата ытти продуктсене «регистрацилесе» ҫӳренĕ. Ҫав контролерсене хресченсем вĕлернĕ пуль тесе шутлаҫҫĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРҪĂ ĔҪĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем, малалла куҫса пырса, 7 хулана илнĕ, вăл шутра Лорино, Сан-Марко тата Понте хулисене йышăнса илнĕ. Термоли районĕнче кĕпер умĕнчи укрепленисене аслăлатса пынă.

ФРАНЦИ ХАЛĂХĔ ГИТЛЕРЛА ЗАХВАТЧИКСЕМПЕ КĔРЕШЕТ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Газетт де Лозанн» хаҫат Франци халăхĕ гитлерла захватчиксене хирĕҫ тăрасси вăйланни ҫинчен ҫырать. Вăл ҫапла ҫырать, нимĕҫсене тапăнасси тата саботажла, сăтăрла ĕҫсем тăвасси йышлăланнăҫемĕн йышлăланса пырать. Вăтаҫĕр, Хĕвелтухăҫ тата Хĕвеланăҫ Францири чылай районсенче, чугун ҫулсем юсавлă мар пирки, поездсем кашни кун нумай кая юлса ҫӳреҫҫĕ. Хăшпĕр чухне, чугунҫул тĕввисен сывăхĕнче сăтăрла ĕҫсем тунă пирки, ҫав станцисем урлă поездсем ҫӳресси йăлтах чарăнса ларать.

Вăтаҫĕр Францири чылай районсенче Лаваль влаҫĕсем ялхуҫалăх продукчĕсем нумай туртса илме пултарайман, мĕншĕн тесен ялти халăх ҫав продуктсене туртса илекен чиновниксене тĕрлĕ майпа кансĕрлет. Продуктсем туртса илме пулăшакан ҫынсен фермисемпе ҫурчĕсене вут тивертеҫҫĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Мадридран ҫапла пĕлтерет: вăрттăн ĕҫлекен патриотла организацисем Оверньь тăвĕсем хушшинче питĕ активлăн кĕрешме пуҫланă, ҫавăнпа Виши «правительстви» ҫав района ҫĕнĕрен полицейскисем янă. Нумаях пулмасть партизансем карательсен отрядне аркатса тăкнă, Лаваль карателĕсене пысăк ҫухатусем тӳстернĕ.

КĔСКЕН

● Францире 50 патриота персе пăрахнă. Гитлеровецсем вĕсене саботаж тата террорла ĕҫсем тунă тесе айăпланă.

● Чехословакире гитлеровецсем 7 чеха персе пăрахнă. Вĕсене «патшалăх сыхлăхне хавшатма тăрăшаҫҫĕ» тесе айăпланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Ҫурҫĕрти тинĕс ҫулĕсен Мускаври Главнăй Управленийĕнче АРКТИКĂРИ 342-МĔШ №-ЛĔ ПОЧТА АГЕНТСТВИНЕ уҫнă. Ҫав агентство ССР Союзĕн пур пункчĕсенчен те Арктикăна яма ҫулталăк тăршшĕпех корреспонденцисем йышăнать.

Арктикăна ҫыру ярас текенсен конверт ҫине ҫакăн пек адрес ҫырмалла:

МОСКВА, УЛ. РАЗИНА, ДОМ 9, АРКТИЧЕСКОЕ ПОЧТОВОЕ АГЕНТСТВО.

Малалла ҫырăва ăҫта ямалли пункт ячĕне ҫырмалла, ҫырăва илме тивĕҫлĕ ҫыннăн хушаматне, ятне тата ашшĕ ятне ҫырмалла.

Адрес ҫырмалли тĕслĕх:

МОСКВА, 342,
Ул. Разина, дом 9,
Арктическое почтовое агентство
Бухта Кожевникова
Иванову Сергею Петровичу

Москва, 55. Тихвинская ул., 24 кв. 47. Иванова М. С.

Почтовăй карточка ярас пулсан—60 пус, хупă ҫыру ярас пулсан (20 грамм таран туртаканнишĕн)—1 тенкĕ тӳлемелле.

Полярниксем патне яма укҫа перевочĕсем, посылкăсем, хаклă ҫырусем тата адресата алла тыттарни ҫинчен каялла пĕлтермелли хутпа ямалли ҫырусене йышăнмаҫҫĕ.

ҪЫХĂНУ ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔН ЧĂВАШ УПРАВЛЕНИЙĔ.

ИЗОЛЯЦИ МАТЕРИАЛĔСЕН ЗАВОЧĔ оборудовани юсама тата монтаж тĕлĕшпе ĕҫлеме пултаракан тĕрлĕ квалификациллĕ рабочисене пухать.

Рабочисем валли общежити тата столовăй пур.

Ҫавăн пекех тата снабжени начальникĕ, машинистка, счетовод тата ФЗО шкулĕнче вĕренекенсене вĕрентме пултаракан мастерсем кирлĕ.

Ҫак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Заволжский детский дом, дирекция завода изоляционных материалов. 2—2.

СССР Наркомтекстилĕн „Энерготрансучтекстилĕн" Шупашкарти филиалĕ ҫак октябрь уйăхĕн 10-мĕшĕнчен пуҫласа 20-мĕшне ҫитиччен 3-мĕш класри шоферсене хатĕрлекен курса кĕрес текенсене илет. Курсра вĕреннĕ чух производствăра ĕҫлеме май килмест.

Курсра вĕреннĕшĕн укҫа тӳлемелле мар.

Мĕн пурĕ 2 уйăх вĕренмелле.

Курса арҫынсене те, хĕрарăмсене те илеҫҫĕ, 17 ҫултан ҫамрăк пулмалла мар, вĕренӳ тĕлĕшĕнчен 7-мĕш класра вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле.

Заявленисене ҫак адреспа памалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Либкнехта, 14. Тел. 6—93. 2—2.

Торф предприятийĕн ансăр чугунҫулĕ ҫинче ĕҫлеме машинист помощникĕсем, движени диспетчерĕсем тата ҫулйĕр мастерĕсем вĕрентсе кăларакан пĕр уйăхлăх курс уҫăлать.

Вĕренекенсем валли общежити, выртса-тăма тӳшек-минтерсем пур, стипенди параҫҫĕ, тăрантса усраҫҫĕ.

Кĕрес текенсен 18 ҫултан кĕҫĕн пулмалла мар, пĕлӳ тĕлĕшпе 5-мĕш класран вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле.

Ҫак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Левый берег реки Волги, Заволжское торфопредприятие. 2—2.

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ ПУР ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ТЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Тарасасене юсама тата вĕсене техника тĕлĕшпе заказчиксем патĕнче майлаштарса тăма чăвашсен тарасасем юсакан завочĕн мастерĕсем кăна пултараҫҫĕ, вĕсен ятарласа панă удостоверени пулмалла

Тарасасене заводсăр пуҫне кам та пулин урăххи юсанине пĕлсен, айăплисене администраци йĕркипе ответ тыттараҫҫĕ, хăшпĕр чухне уголовнăй йĕркепе те айăплаҫҫĕ.

Хăйсен тарасисене яланах юсавлă тытса тăрас текенсем заводпа договор тума пултараҫҫĕ.

Виҫепе тараса комитечĕн Чăваш АССР Совнаркомĕ ҫумĕнчи уполномоченнăйĕ.
Чăвашсен тарасасем юсакан завочĕ.

Чăвашсен опытлă лесхозне главнăй бухгалтер кирлĕ.

Ҫак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ново-Поперечная, 1. Тел. 7—16.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăҫ пайĕн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалăх пайĕн— 5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1845 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53.84 п. л.